26-мӗш ҫул тухать. Хакӗ 20 пус

1944
МАРТ
21
ЫТЛАРИКУН
57 (6552) №

Чӑваш Коммуни

Пӗтӗм тӗнчери пролетарисем, пӗрлешӗр!

ВКП(б) ОБКОМӖПЕ
ШУПАШКАР ХУЛА КОМИТЕЧӖН,
ЧАССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕЧӖН
ТАТА ШУПАШКАР ХУЛА СОВЕЧӖН
ХАҪАЧӖ

ВЕРХОВНЫЙ ГЛАВНОКОМАНДУЮЩИН ПРИКАЗӖ

Совет Союзӗн Маршалне ЖУКОВА

УКРАИНӐРИ 1-мӗш фронт ҫарӗсем, тӑшмана ҫавӑрса илмелли ӑста маневр туса тата фронтран атакӑласа, паян, мартӑн 19-мӗшӗнче, Кременец тӑвӗсен хысакӗ ҫинче хӑватлӑ крепость пулса тӑракан КРЕМЕНЕЦ хулине тытса илнӗ. Ахаль те крепость пулса тӑракан ҫав пункта нимӗҫсем оборона сооруженийӗсем туса тултарса ҫирӗплетнӗ пулнӑ.

КРЕМЕНЕЦ хулине тытса илессишӗн пынӑ ҫапӑҫусенче ПУХОВ генерал-лейтенантпа КИРЮХИН генерал-лейтенантӑн ҫарӗсем, артиллери генерал-майорӗн КУБЕЕВӐН тата СУССКИЙ полковникӑн артиллерисчӗсем, танковӑй ҫарсен генерал-майорӗн КОРОЛЕВӐН танкисчӗсем, авиаци генерал-полковникӗн КРАСОВСКИН, авиаци генерал-майорӗн ГАЛУНОВӐН тата ЛОЖЕЧНИКОВ полковникӑн летчикӗсем чапа тухнӑ.

Тунӑ ҫӗнтерӗве яланлӑха палӑртса хӑварас тесе, КРЕМЕНЕЦ хулине ирӗке кӑларассишӗн пынӑ ҫапӑҫусенче уйрӑмах чапа тухнӑ соединенисемпе чӑҫсене «КРЕМЕНЕЦКИ» тесе ят пама тата орденсемпе наградӑлама тӑратас.

Паян, мартӑн 19-мӗшӗнче, 21 сехетре, пирӗн Тӑван ҫӗршыв столици МУСКАВ, ҫӗрҫирӗм тӑватӑ тупӑпа вуникӗ хут пӗр харӑс персе, КРЕМЕНЕЦ хулине туртса илнӗ УКРАИНӐРИ 1-мӗш фронтӑн паттӑр ҫарӗсене Тӑван ҫӗршыв ячӗпе салют парать.

Питӗ чаплӑ ҫапӑҫнӑшӑн Эсир ертсе пыракан мӗнпур ҫарсене, КРЕМЕНЕЦ хулине ирӗке кӑларассишӗн пынӑ ҫапӑҫусенче пулнӑскерсене, ТАВ ТӐВАТӐП.

Хамӑр Тӑван ҫӗршывӑн ирӗклӗхӗпе никама пӑхӑнманлӑхӗшӗн пыракан ҫапӑҫусенче вилнӗ геройсене ӗмӗр-ӗмӗр мухтав!

Нимӗҫ захватчикӗсене — вилӗм!

Верховный Главнокомандующи
Совет Союзӗн Маршалӗ И. СТАЛИН

1944 ҫулхи мартӑн 19-мӗшӗ.

ВЕРХОВНЫЙ ГЛАВНОКОМАНДУЮЩИН ПРИКАЗӖ

Совет Союзӗн Маршалне КОНЕВА

УКРАИНӐРИ 2-мӗш фронт ҫарӗсем, танковӑй ҫарсемпе пехота вирлӗ маневр туса илнипе, ӗнер, мартӑн 19-мӗшӗнче, МОГИЛЕВ-ПОДОЛЬСКИЙ хулине — пысӑк чугун ҫул узелне тата нимӗҫсен оборонин Днестр ҫинчи тӗреклетнӗ паха пунктне — туртса илнӗ.

МОГИЛЕВ-ПОДОЛЬСКИЙ хулине туртса илессишӗн ҫапӑҫнӑ чухне ТРОФИМЕНКО генерал-лейтенантӑн, ГОРЯЧЕВ генерал-лейтенантӑн тата СЕМЕНОВ генерал-майорӑн ҫарӗсем, танковӑй ҫарсен генерал-лейтенанчӗн КРАВЧЕНКӐН тата танковӑй ҫарсен генерал-лейтенанчӗн ВОЛКОВӐН танкисчӗсем, артиллери генерал майорӗн ЛЕБЕДЕВӐН артиллерисчӗсем тата инженернӑй ҫарсен генерал-майорӗн ЦИРЛИНӐН сапёрӗсем чапа тухнӑ.

Тунӑ ҫӗнтерӗве яланлӑха палӑртса хӑварас тесе, МОГИЛЕВ-ПОДОЛЬСКИЙ хулине ирӗке кӑларассишӗн ҫапӑҫнӑ чухне уйрӑмах чапа тухнӑ соединенисемпе чӑҫсене «МОГИЛЕВ-ПОДОЛЬСКИ» тесе ят пама тата орденсемпе наградӑлама тӑратас.

Паян, мартӑн 20-мӗшӗнче, 20 сехетре, пирӗн Тӑван ҫӗршыв столици МУСКАВ, ҫӗрҫирӗм тӑватӑ тупӑпа вуникӗ хут пӗр харӑс персе, МОГИЛЕВ-ПОДОЛЬСКИЙ хулине туртса илнӗ УКРАИНӐРИ 2-мӗш фронтӑн паттӑр ҫарӗсене Тӑван ҫӗршыв ячӗпе салют парать.

Питӗ чаплӑ ҫапӑҫнӑшӑн Эсир ертсе пыракан мӗнпур ҫарсене, МОГИЛЕВ-ПОДОЛЬСКИЙ хулине ирӗке кӑларассишӗн ҫапӑҫнӑ ҫӗрте пулнӑскерсене, ТАВ ТӐВАТӐП.

Хамӑр Тӑван ҫӗршывӑн ирӗклӗхӗпе никама пӑхӑнманлӑхӗшӗн ҫапӑҫса вилнӗ геройсене ӗмӗр-ӗмӗр мухтав!

Нимӗҫ захватчикӗсене — вилӗм!

Верховный Главнокомандующи
Совет Союзӗн Маршалӗ И. СТАЛИН.

1944 ҫулхи мартӑн 20-мӗшӗ.

ВЕРХОВНЫЙ ГЛАВНОКОМАНДУЮЩИН ПРИКАЗӖ

Совет Союзӗн Маршалне ЖУКОВА

УКРАИНӐРИ 1-мӗш фронт ҫарӗсем паян, мартӑн 20-мӗшӗнче, флангсенчен ҫавӑрса илмелли маневр туса тата штурмласа, ВИННИЦА хулине — Украинӑн область центрӗпе промышленнӑҫӗн пысӑк центрне, нимӗҫсем хӑйсен КӐНТӐР БУГ хӗрринчи оборонин вӑйлӑ тӗреклетнӗ пункчӗ туса хунӑскере — туртса илнӗ.

ВИННИЦА хулине туртса илессишӗн ҫапӑҫнӑ чухне МОСКАЛЕНКО генерал-полковникӑн, ШЕВЕРДИН генерал-лейтенантӑн, КИСЛИЦЫН генерал-майорӑн ҫарӗсем, артиллери генерал-майорӗн ЛИХАЧЕВӐН артиллерисчӗсем, БЕЛЯЕВ полковникӑн танкисчӗсем, авиаци генерал-полковникӗн КРАСОВСКИН тата авиаци генерал-майорӗн КАМАНИНӐН лечтикӗсем чапа тухнӑ.

Тунӑ ҫӗнтерӗве яланлӑха палӑртса хӑварас тесе, ВИННИЦА хулине ирӗке кӑларассишӗн ҫапӑҫнӑ чухне уйрӑмах чапа тухнӑ соединенисемпе чӑҫсене «ВИННИЦКИ» тесе ят пама тата орденсемпе наградӑлама тӑратас.

Паян, мартӑн 20-мӗшӗнче, 21 сехетре, пирӗн Тӑван ҫӗршыв столици МУСКАВ, икҫӗр ҫирӗм тӑватӑ тупӑпа ҫирӗм хут пӗр харӑс персе, ВИННИЦА хулине туртса илнӗ УКРАИНӐРИ 1-мӗш фронтӑн паттӑр ҫарӗсене Тӑван ҫӗршыв ячӗпе салют парать.

Питӗ чаплӑ ҫапӑҫнӑшӑн Эсир ертсе пыракан мӗнпур ҫарсене, ВИННИЦА хулине ирӗке кӑларассишӗн ҫапӑҫнӑ ҫӗрте пулнӑскерсене, ТАВ ТӐВАТӐП.

Хамӑр Тӑван ҫӗршывӑн ирӗклӗхӗпе никама пӑхӑнманлӑхӗшӗн ҫапӑҫса вилнӗ геройсене ӗмӗр-ӗмӗр мухтав!

Нимӗҫ захватчикӗсене — вилӗм!

Верховный Главнокомандующи
Совет Союзӗн Маршалӗ И. СТАЛИН.

1944 ҫулхи мартӑн 20-мӗшӗ.

Совет Информаци Бюровӗнчен

МАРТӐН 19-МӖШӖНЧИ ОПЕРАТИВНӐЙ СВОДКА

УКРАИНӐРИ 1-мӗш фронт ҫарӗсем, тӑшмана ҫавӑрса илмелли ӑста маневр туса тата фронтран атакӑласа, мартӑн 19-мӗшӗнче Кременец тӑвӗсен хысакӗ ҫинче хӑватлӑ крепость пулса тӑракан КРЕМЕНЕЦ хулине туртса илнӗ. Ахаль те крепость пулса тӑракан ҫав пункта нимӗҫсем оборона сооруженийӗсем туса тултарса ҫирӗплетнӗ пулнӑ. Пирӗн ҫарсем тата тӑшманпа ҫапӑҫса халӑх пурӑнакан ытти 40 пункта ытла йышӑннӑ. Вӑл шутра — ПЛАЩУВКА, СЕСТРАТЫН, СРЕБНО, КРУПЕЦ, МИХАЛУВКА, ПОДЗАМЧЕ, КРУКИ, СИТНО, ЯНУВКА, БЯЛОГРУДКА, КАМЕНИЦА ятлӑ пысӑк ялсем тата КАМЕНИЦА, ВОЛЫНСКАЯ, РУДНЯ, ПОЧАЮВСКАЯ, МИХАЛУВКА ятлӑ чугун ҫул станцийӗсем.

Мартӑн 19-мӗшӗнче пирӗн ҫарсем ВИННИЦА хулинчен ҫурҫӗр-хӗвеланӑҫнерехре тӑшманпа ҫапӑҫса малалла куҫса пынӑ. ЛУКА, КОЖУХОВ, МЕДВЕДОВКА, КУСИКОВЦЫ, ИВЧА, ОСОЛЫНКА, НИКОЛАЕВКА, МАЙДАН, МИЗЯКОВСКИЕ ХУТОРА, СТРИЖАВКА ятлӑ пысӑк ялсене туртса илнӗ.

ЖМЕРИНКА хулинчен кӑнтӑртарахра пирӗн ҫарсем наступлени ҫаплах вӑйлатса пынӑ, Винница облаҫӗнчи СТАНИСЛАВЧИК, ШПИКОВ район центрӗсене туртса илнӗ, ҫавӑн пекех тата тӑшманпа ҫапӑҫса халӑх пурӑнакан ытти 50 пункта ытла йышӑннӑ. Вӑл шутра — ТАРАСОВКА, ПЕНЬКОВКА, МИХАЙЛОВКА, МУРАФА, РАХНЫ, ЛЕСОВЫЕ, ДЕРЕБЧИН, ЗВЕДЕНОВКА, ДЖУРИН, ХОМЕНКИ, ПОЛИТАНКИ, КАРПОВКА, РОТМИСТРОВКА, СЕРЕБРИЯ ятлӑ пысӑк ялсем тата БУДКИ, ЯРОШЕНКА, РАХНЫ ятлӑ чугун ҫул станцийӗсем. Пирӗн ҫарсем МОГИЛЕВ-ПОДОЛЬСКИЙ хули патне пырса ҫитнӗ те тӑшманпа хула тулашӗнче ҫапӑҫма тытӑннӑ.

УКРАИНӐРИ 2-мӗш фронт ҫарӗсем ДНЕСТР шывӗ патне 100 километр ытла фронт тӑршшӗнче пырса тухнӑ, 50 километр тӑршшӗ ытла участок ҫинче ҫав шыв урлӑ каҫнӑ та унӑн сылтӑм енче халӑх пурӑнакан 40 пункта ытла туртса илнӗ, вӑл шутра Молдаван ССР-ӗн СОРОКИ ятла уезд хулине йышӑннӑ.

НОВО-УКРАИНКА хулинчен кӑнтӑр-хӗвеланӑҫнерехре пирӗн ҫарсем тӑшманпа ҫапӑҫса ҫаплах малалла тапӑнса пынӑ, халӑх пурӑнакан 80 пункта ытла туртса илнӗ. Вӑл шутра — ДОРОЖИНКА, ЮЗЕФПОЛЬ, СУХОЙ ТАШЛЫК, ЛАЩЕВКА, ПОДГУРЬЕ, СТАНКОВАТА, МИХАЙЛОВКА, ЛЮБОМИРКА, ТРУДОЛЮБОВКА, НОВО-ГРИГОРЬЕВКА, ВОЕВОДСКОЕ, ЖУКОВО ятлӑ пысӑк ялсем тата БЕШКЕТОВО, ГЛИНЯНАЯ ятлӑ чугун ҫул станцийӗсем.

БОБРИНЕЦ хулинчен кӑнтӑр-хӗвеланӑҫнерехре пирӗн ҫарсем, наступление вӑйлатса пырса, Николаев облаҫӗнчи ЕЛАНЕЦ район центрне, Одесса облаҫӗнчи БРАТСКОЕ район центрне туртса илнӗ, ҫавӑн пекех тата тӑшманпа ҫапӑҫса ытти 70 яла ытла йышӑннӑ. Вӑл шутра — КАМЕНОВАТКА, КРИВАЯ ПУСТОШЬ, НОВО-АЛЕКСАНДРОВКА, ИВАНОВКА, НАДЕЖДОВКА, НИКОЛЬСКОЕ, МИХАЙЛОВКА, МАЛОЕ СОЛОНОЕ, РАЦЕВ, БЕЛОУСОВКА ятлӑ пысӑк ялсем.

Фронтӑн ытти участокӗсенче разведчиксем шыраса ҫӳренӗ.

Мартӑн 18-мӗшӗнче пирӗн ҫарсем мӗнпур фронтсенче нимӗҫсен 45 танкне ҫӗмӗрсе тӑкнӑ. Сывлӑшри ҫапӑҫусенче тата зенитнӑй артиллери тӑшманӑн 52 самолетне персе ӳкернӗ.

Чӑваш АССР-ӗн 1-мӗш созыври Верховный Совечӗн VII-мӗш Сессийӗ

Чӑваш АССР-ӗн 1-мӗш созыври Верховный Совечӗн VII-мӗш Сессийӗн 1944 ҫулхи мартӑн 19-мӗшпе 20-мӗшӗнчи ларӑвӗсем ҫинчен ИНФОРМАЦИЛЛӖ ПӖЛТЕРӲ

Мартӑн 19-мӗшӗнче, кӑнтӑрла 11 сехетре, Советсен Ҫуртӗнчи ларусем пулакан залра Чӑваш АССР-ӗн 1-мӗш созыври Верховный Совечӗн VII-мӗш Сессийӗн иккӗмӗш ларӑвӗ пулса иртнӗ.

Председатель пулса Чӑваш АССР Верховный Совет Председателӗн заместителӗ В. М. Немцев депутат ертсе пырать.

Кун йӗркинче—Чӑваш АССР-ӗн 1944 ҫулхи бюджечӗ тата Чӑваш АССР-ӗн 1941, 1942, 1943 ҫулсенчи бюджетне пурнӑҫлани ҫинчен калакан отчетсене ҫирӗплетесси ҫинчен тунӑ доклада сӳтсе-явасси.

Пренире Д. Я. Митьков депутат (Шӗмшеш суйлав округӗ), П. Е. Ефремов депутат (Карай суйлав округӗ), Е. Х. Харитонова депутат (Уравӑш суйлав округӗ), ӗҫсынни депутачӗсен Сӗнтӗрвӑрри райсовет исполкомӗн председателӗ Я. Г. Маклашкин, Чӑваш АССР Халӑх Комиссарӗсен Совечӗн председателӗн заместителӗ К. Е. Евлампьев, В. Т. Харитонов депутат (Шупашкар суйлав округӗ), И. П. Петров депутат (Мӑнҫырма суйлав округӗ), Чӑваш АССР Вырӑнти промышленность Халӑх Комиссарӗ М. Д. Егоров, Ф. Я. Смирнова депутат (Таяпа суйлав округӗ), ӗҫсынни депутачӗсен Вӑрмар райсовет исполкомӗн председателӗ П. М. Биктимиров, Чӑваш АССР Совнаркомӗ ҫумӗнчи искусство ӗҫӗсен Управленийӗн начальникӗ А. Д. Кэлкан, ӗҫсынни депутачӗсен Сӗнтӗр райсовет исполкомӗн председателӗ И. Е. Свешников тата К. И. Иванов депутат (Катек суйлав округӗ) тухса каларӗҫ.

Ҫакӑнпа Чӑваш АССР-ӗн 1-мӗш созыври Верховный Совечӗн VII-мӗш Сессийӗн иккӗмӗш ларӑвӗ хупӑнчӗ.

* * *

Мартӑн 19-мӗшӗнче, каҫхине 5 сехетре, Советсен Ҫуртӗнчи ларусем пулакан залра Чӑваш АССР-ӗн 1-мӗш созыври Верховный Совечӗн VII-мӗш Сессийӗн виҫҫӗмӗш ларӑвӗ пулса иртнӗ.

Председатель пулса Чӑваш АССР Верховный Совет Председателӗн заместителӗ В. М. Немцев депутат ертсе пырать.

Кун йӗркинче — Чӑваш АССР-ӗн 1944 ҫулхи бюджечӗ тата Чӑваш АССР-ӗн 1941, 1942, 1943 ҫулсенчи бюджетне пурнӑҫлани ҫинчен калакан отчетсене ҫирӗплетесси ҫинчен тунӑ доклада сӳтсе-явасси.

Пренире ӗҫсынни депутачӗсен Шупашкар хула Совет исполкомӗн председателӗ П. И. Аникин, РСФСР Верховный Совечӗн депутачӗ А. А. Малинин, Чӑваш АССР Сывлӑха Сыхлав Халӑх Комиссарӗ А. И. Лихачев, чӑваш писателӗ И. С. Тукташ тата Чӑваш АССР Халӑх Комиссарӗсен Совечӗн Председателӗ А. М. Матвеев юлташсем тухса каларӗҫ.

Ҫакӑнпа Чӑваш АССР-ӗн 1-мӗш созыври Верховный Совечӗн VII-мӗш Сессийӗн виҫҫӗмӗш ларӑвӗ хупӑнчӗ.

* * *

Мартӑн 20-мӗшӗнче, ирхине 10 сехетре, Советсен Ҫуртӗн ларусем пулакан залӗнче Чӑваш АССР-ӗн 1-мӗш созыври Верховный Совечӗн VII-мӗш Сессийӗн тӑваттӑмӗш ларӑвӗ пулса иртнӗ.

Председатель пулса Чӑваш АССР Верховный Совет Председателӗн заместителӗ В. М. Немцев депутат ертсе пынӑ.

Чӑваш АССР Верховный Совечӗ Чӑваш АССР Финанс Халӑх Комиссарӗн И. И. Золотников юлташӑн тата Чӑваш АССР Верховный Совечӗн Бюджет Комиссийӗн Председателӗн К. Д. Медянин депутатӑн юлашки сӑмахӗсене итленӗ. Чӑваш АССР Верховный Совечӗ Чӑваш АССР-ӗн 1944 ҫулхи бюджетне пӗр саслӑн пулса ҫирӗплетнӗ. Малтан статьясем тӑрӑх вуласа, унтан пӗтӗмӗшпе вуласа, «Чӑваш Автономлӑ Советлӑ Социализмлӑ Республикин 1944 ҫулхи бюджечӗ ҫинчен» калакан закона пӗр саслӑн ҫирӗплетнӗ.

Кун хыҫҫӑн Сесси кун йӗркинчи иккӗмӗш ыйтӑва пӑхса тухма тытӑнать.

Чӑваш АССР Верховный Совет Президиумӗн Указӗсене, VI-мӗшпе VII-мӗш Сессисем хушшинче йышӑннӑскерсене тата Чӑваш АССР Верховный Совечӗ ҫирӗплетме тивӗҫлӗскерсене, ҫирӗплетесси ҫинчен Чӑваш АССР Верховный Совет Президиумӗн секретарӗ А. И. Измайлов депутат доклад туса панӑ.

Чӑваш АССР Верховный Совечӗ Чӑваш АССР Конституцийӗн 14-мӗш статьи ҫумне хушса ҫырасси ҫинчен кӑларнӑ закона пӗр саслӑн пулса йышӑннӑ.

Сесси Чӑваш АССР Верховный Совет Президиумӗ А. С. Зверев юлташа Чӑваш АССР Вӑрман промышленность Халӑх Комиссарӗ пулса ӗҫлеме уйӑрса лартни ҫинчен кӑларнӑ Указа ҫирӗплетнӗ.

Кун хыҫҫӑн председатель пулса ертсе пыраканӗ—Чӑваш АССР Верховный Совет Председателӗн заместителӗ В. М. Немцев депутат VII-мӗш Сессин кун йӗркине лартнӑ ыйтусене пурне те сӳтсе явни тата Чӑваш АССР Верховный Совечӗн VII-мӗш Сессийӗ хупӑнни ҫинчен пӗлтерет.

Чӑваш АССР-ӗн 1944 ҫулхи бюджечӗ тата Чӑваш АССР-ӗн 1941, 1942, 1943 ҫулсенчи бюджетне пурнӑҫлани ҫинчен

Чӑваш АССР Верховный Совечӗн Бюджет Комиссийӗн Председателӗ К. Д. Медянин депутат тунӑ содокладран

Чӑваш АССР Верховный Совечӗн Бюджет Комиссийӗ Чӑваш АССР-ӗн 1941, 1942, 1943 ҫулсенчи бюджетне мӗнле пурнӑҫлани ҫинчен калакан отчетсене пӑхса тухрӗ те мана ҫав бюджетсене пурнӑҫа кӗртес тӗлӗшпе Чӑваш правительстви пур мерӑсене те йышӑннӑ, тесе Верховный Совета пӗлтерме хушрӗ.

Бюджет Комиссийӗ 1941, 1942 тата 1943 ҫулсенчи бюджетсене мӗнле пурнӑҫа кӗртни ҫинчен калакан отчетсене Чӑваш АССР Халӑх Комиссарӗсен Совечӗ палӑртнӑ суммӑсем чухлӗ ҫирӗплетме сӗнет.

Чӑваш АССР Верховный Совечӗн VI-мӗш Сессийӗнче Чӑваш АССР Финанс Халӑх Комиссариачӗн ӗҫне хытӑ критикленӗччӗ. Халӑх Комиссариачӗ ҫав критикӑна шута илчӗ те 1943 ҫулхи IV-мӗш кварталта финанспа бюджет ӗҫне кӑштах лайӑхлатрӗ. Апла пулин те Финанс Халӑх Комиссариачӗн ӗҫӗнче халӗ те чылай пысӑк ҫитменлӗхсем пур-ха.

Тӑтӑшах, ҫулран ҫулах, бюджетпа пӑхнӑ укҫана расходласа ҫитерейменни (1941 ҫулта 3.930,0 пин тенкӗ, 1942 ҫулта 7.800,0 пин тенкӗ, 1943 ҫулта 9.692,5 пин тенкӗ расходламасӑр юлнӑ) Чӑваш АССР Халӑх Комиссариачӗ бюджетпа пӑхнӑ укҫапа мӗнле усӑ курнине ҫителӗксӗр контрольлесе тӑнине кӑтартса парать.

Чӑваш АССР Верховный Совечӗн VI-мӗш Сессийӗнче «Ачасене пурне те пуҫламӗш шкулсенче вӗрентмелли» закона мӗнле пурнӑҫа кӗртни ҫинчен сӳтсе-явнӑччӗ, пренисенче тухса калакан депутатсем Ҫутӗҫ Халӑх Комиссариачӗ хӑйне уйӑрса панӑ укҫапа начар усӑ курни ҫине кӑтартса панӑччӗ. Анчах Ҫутӗҫ Халӑх Комиссарӗ Макаров юлташ ҫав кӑтартусене шута илмерӗ, ҫавӑнпа панӑ укҫапа усӑ курас ӗҫе лайӑхлатмарӗ.

VII-мӗш Сессире социаллӑ-культурӑллӑ мероприятисем валли уйӑрса панӑ укҫапа ҫителӗксӗр усӑ курнине тепӗр хут палӑртма тивет. 1943 ҫулхи бюджета Ҫутӗҫ Халӑх Комиссариачӗ 97,9 процент ҫеҫ пурнӑҫа кӗртнӗ. Шкулсем ҫумӗнчи интернатсем валли 1943 ҫулта уйӑрса панӑ укҫапа 36,9 процент, библиотекӑсем валли уйӑрса панӑ укҫапа 54,8 процент, районсенчи культура ҫурчӗсем валли уйӑрса панӑ укҫапа 67,3 процент, вулав ҫурчӗсем валли уйӑрса панӑ укҫапа 53,9 процент ҫеҫ усӑ курнӑ. Ашшӗ-амӑшсӗр, никам пӑхмасӑр тӑрса юлнӑ ачасем валли панӑ укҫана 52,6 процент ҫеҫ расходланӑ. Шкулсем валли инвентарьпе оборудовани илме панӑ укҫапа вара пачах та усӑ курман.

Чӑваш АССР Сывлӑха сыхлав Халӑх Комиссариачӗ хӑйне уйӑрса панӑ укҫа-тенкӗпе отчет паракан ҫулсенче ҫакӑн пек усӑ курнӑ: 1941 ҫулта—79,1 процент, 1942 ҫулта — 106,4 процент, 1943 ҫулта—81,8 процент. 1943 ҫулхи бюджет тӑрӑх, ялти больницӑсене панӑ укҫа-тенкӗрен 432 пин тенки усӑ курмасӑр юлнӑ.

Бюджет Комиссийӗ Чӑваш республикин 1944 ҫулхи бюджечӗн дохочӗсемпе расхочӗсене пӑхса тухрӗ те, Верховный Совета ҫакӑн ҫинчен пӗлтерме кирлӗ тесе шутлать: бюджета хамӑр республикӑн халӑх хуҫалӑх планӗпе тата РСФСР-ӑн РСФСР Верховный Совечӗн V-мӗш Сессийӗ ҫирӗплетнӗ государственнӑй бюджечӗпе пӗтӗмӗшпех килӗштерсе тунӑ.

Чӑваш АССР Халӑх Комиссарӗсен Совечӗ республикӑн 1944 ҫулхи бюджетне доходсем енӗпе — 163.328,3 пин тенкӗ чухлӗ, расходсем енӗпе —163.076,1 пин тенкӗ чухлӗ, ҫапла вара доходсене расходсенчен 252,2 пин тенкӗ ытларах йышӑнчӗ. Республикӑн 1944 ҫулхи бюджечӗн дохочӗсем 1943 ҫулхинчен 11.434,7 пин тенкӗ ытларах пулаҫҫӗ, урӑхла каласан 7,5 процент ӳсеҫҫӗ. 1943 ҫулхипе танлаштарсан, бюджетӑн расхочӗсем те 9,8 процент ӳсеҫҫӗ.

Бюджет Комиссийӗ Чӑваш АССР Халӑх Комиссарӗсен Совечӗ республикӑн 1944 ҫулхи бюджечӗн расхочӗсене мӗнле тумаллине тӗрӗс палӑртнӑ тесе шутлать.

Ун хыҫҫӑн Медянин юлташ Чӑваш АССР-ӗн 1944 ҫулхи бюджечӗн тӗп статьисем ҫинче чарӑнса тӑрать.

Депутат юлташсем! Бюджет Комиссийӗ Чӑваш АССР-ӗн 1944 ҫулхи бюджетне чылай тӳрлетӳсем кӗртме кирлине сире пӑхса тухма сӗнет.

Бюджет Комиссийӗ ҫакна палӑртнӑ: Апат-ҫимӗҫ Халӑх Комиссариачӗ 1944 ҫулхи финанс планне тунӑ чухне предприятисен производство нушисем валли илмелли вуттӑн кашни кубометрне 43 тенкӗ шутланӑ. 1943 ҫулта кашни кубометр вутта 19 тенкӗ парса илнӗ пулнӑ. Кунсӑр пуҫне макарон фабрики валли чӗртавар турттарса килессине хаклӑрах хакпа шутланӑ. Ҫакӑ вӑл продукцин хӑйне ларакан хакне ӳстерсе ярасси патне илсе пыма пултарать. Вутӑ хакне иртнӗ ҫулхи пекех хӑварас пулать, ҫав шутпа вара Апат-ҫимӗҫ Халӑх Комиссариачӗ енӗпе бюджета хывмалли укҫана 60 пин тенкӗ ӳстермелле.

Финанс Халӑх Комиссариачӗ шутласа пӑхнӑ тӑрӑх, Вырӑнти топливо промышленноҫӗн Управленийӗ ӗҫсыннисене куллен кирлӗ таварсем туса кӑларнинчен кӗрекен укҫана шута илмесӗр хӑварнӑ. Ҫавӑнпа вырӑнти топливо промышленность управленийӗнчен бюджета хывмалли укҫа-тенкӗн хисепне 30 пин тенкӗ ӳстермелле.

Чӑваш АССР Халӑх Комиссарӗсен Совечӗ республикӑри промысла кооперацийӗн союзӗсем енӗпе 1944 ҫулта продукци 55 миллион та 800 пин тенкӗлӗх туса кӑларма йышӑннӑ. РСФСР промысла кооперацийӗн управленийӗ вара республикӑна ҫав продукцие 56.900 пин тенкӗлӗх туса кӑларма ҫирӗплетсе панӑ, урӑхла каласан программӑна 1.000 пин тенкӗлӗх ӳстернӗ. Ҫавна май производство программине ӳстерсе, производствӑпа ҫыхӑнман расходсене чакарса тата артельсенчи оборудованисемпе усӑ курассине лайӑхлатса бюджета хывмалли укҫа хисепне татах 250 пин тенкӗ чухлӗ ӳстерес пулать.

Районсене пӑхӑнса тӑракан промышленноҫран кӗрекен доходсене (вырӑнти промышленность, апат-ҫимӗҫ промышленноҫӗ тата строительство материалӗсем тӑвакан промышленность енӗпе) 161 пин тенкӗ чухлӗ ӳстермелле. 1944 ҫулти январӗн 1-мӗшӗ тӗлне оборотран кӗнӗ укҫа-тенкӗн ытлашши юлнӑ пайне бюджета хывмалла, мӗншӗн тесен 1943 ҫулта вӑл укҫапа усӑ курман тата 1944 ҫулхи бюджета тунӑ чухне ӑна шута илмен пулнӑ.

1943 ҫулта бюджета ялхуҫалӑх продукчӗсен хатӗрлевӗсенчен 1.353,5 пин тенкӗ кӗнӗ, 1944 ҫулта вара ҫав суммӑна пӗчӗклетнӗ, урӑхла каласан 1.108 пин тенкӗ ҫеҫ кӗмелле пӑхнӑ. Ҫав вӑхӑтрах хатӗрлев планӗ пӗчӗкленмест. Бюджет Комиссийӗ Сесси умне 1944 ҫулта ялхуҫалӑх продукчӗсен хатӗрлевӗсенчен бюджета хывмалли укҫана 237 пин тенкӗ чухлӗ ӳстерме ыйту лартать.

Ҫавӑн пекех налогсем пухнисӗр пуҫне кӗрекен доходсене 250 пин тенкӗ чухлӗ ӳстермелле, ҫакӑ вӑл дебитор парӑмӗсене пӗтерне шутпа, бюджет учрежденийӗсемпе ытти хуҫалӑх организацийӗсен государство фончӗн пурлӑхӗсене вырнаҫтарса тухнӑ шутпа пулмалла.

Бюджет Комиссийӗ Чӑваш АССР Сутуилӳ Халӑх Комиссариачӗн организацийӗсен 1943 ҫулхи ӗҫӗ ҫакна кӑтартса панине палӑртать: 1944 ҫулхи январӗн 1-мӗшӗ тӗлне пулнӑ ҫирӗп пассивсене

(Юлашки 2-мӗш страницӑра).

Чăваш АССР-ĕн 1-мĕш созыври Верховный Совечĕн VII-мĕш Сессийĕ

Чăваш АССР-ĕн 1944 çулхи бюджечĕ тата Чăваш АССР-ĕн 1941, 1942, 1943 çулсенчи бюджетне пурнăçлани çинчен

Чăваш АССР Верховный Совечĕн Бюджет Комиссийĕн Председателĕ К. Д. Медянин депутат тунă содокладран

(Юлашки)

ÿстерсе пырса, вĕсене хăйсен оборотри укçи-тенкисен шутне кĕртсе, çак Халăх Комиссариачĕ енĕпе бюджета татах 90 пин тенкĕ укçа хывма май пур.

Бюджет Комиссийĕ сĕнекен тÿрлетÿсем Чăваш АССР-ĕн 1944 çулхи бюджечĕн дохочĕсене 1.078 пин тенкĕ чухлĕ ÿстерме май параççĕ.

Бюджет Комиссийĕ çĕнĕрен тупнă укçа-тенке çакăн пек вырнаçтарса тухма сĕнет:

1. Социаллă Обеспечени Халăх Комиссариатне — Канашри протезсем тăвакан мастерской валли—50 пин тенкĕ хушса парас.

2. Сывлăха сыхлав Халăх Комиссариатне—трахомăпа кĕрешес тĕлĕшпе курссем туса ирттерме—50 пин тенкĕ хушса парас.

3. Шупашкар хула совечĕн исполкомне—политика тата çутĕç учрежденийĕсен çурчĕсене юсас ĕç валли—40 пин тенкĕ хушса парас.

4. РСФСР Верховный Совечĕн Сессийĕ Чăваш АССР бюджетне кĕртнĕ улшăнусемпе килĕшÿллĕн, оборотран илмелли налогсен хисепне 491 пин тенкĕ пĕчĕклетес, вĕсем 1944 çулхи бюджета кĕмесĕр юлнă пулнă.

5. Электростанцисен тупăшĕсенчен бюджета хывмалли тÿлевсене 447 пин тенкĕ чухлĕ чакарас.

Çапла вара, улшăнусем кĕртсе, Бюджет Комиссийĕ Верховный Совета Чăваш АССР-ĕн 1944 çулхи бюджетне доходсем енĕпе 163.468.3 пин тенкĕ чухлĕ, расходсем енĕпе 163.216,1 пин тенкĕ çирĕплетме, доходсене расходсенчен 252,2 пин тенкĕ ытларах пулмалла туса çирĕплетме ыйтать.

Халăх хуçалăхĕн кашни отраслĕнчех накопление ÿстерсе пыма пысăк майсем пур. Вырăнти ресурссемпе май пур таранах усă курса ĕçлекен, çухатусем тăвассине тата хуçасăрлăха хирĕç татăклăн кĕрешсе ĕçлекен предприятисем бюджет умĕнчи хăйсен тивĕçлĕхне пурнăçа кĕртме пултараççĕ.

Çакăн пек тĕслĕхсем илсе пăхар. Пирĕн республикăри районсенче хуласене пăхăнса тăракан апат-çимĕç промышленноçĕ 1943 çулта производство заданине пĕтĕм продукци енĕпе 109,1 процент тултарнă. Республикăна пăхăнса тăракан промышленноçĕ енĕпе продукци хăйне ларакан хаке плана пăхнинчен 0,5 процент чакнă, çакă вара 33 пин тенкĕ ытларах тупăш панă; Апат-çимĕç промышленноçĕ Халăх Комиссариачĕ енĕпе вара (район предприятийĕсене те шута илсен) продукци хăйне ларакан хаке йÿнетсе, плана пăхнинчен 74,5 пин тенкĕ укçа ытларах перекетлесе хăварнă. Апат-çимĕç промышленноçĕ Халăх Комиссариачĕ 1.705,6 пин тенкĕ тупăш панă, урăхла каласан накоплени планне 140 процент ытларах пурнăçланă. Çакă вара Халăх Комиссариачĕ производство умĕнчи тивĕçлĕхне ăнăçлăн пурнăçа кĕртме май панă, наркомат бюджета 822 пин тенкĕ парас вырăнне 875 пин тенкĕ панă, урăхла каласан хăйĕн обязательствине 106,5 процент пурнăçларĕ. Апат-çимĕç промышленноçĕ Халăх Комиссариачĕ 1943 çулта расчет дисциплинине те учетпа отчет ĕçне те лайăхлатрĕ. 1943 çулта Шупашкарти сăра завочĕ, Канашри, Кувакнин, Вăрмари, Сĕрпÿри, Сĕмĕрлери тата ытти чылай районсенче хуласенчи апат-çимĕç комбиначĕсем лайăх ĕçлерĕç.

Çакăнпа пĕрлех Чăваш АССР Апат-çимĕç промышленноçĕн Халăх Комиссариачĕн ĕçĕнче çитменлĕхсем те пур-ха. Халăх Комиссариачĕ хăйĕн мĕнпур предприятийĕсене йĕркеллĕ ĕçлекен тума пултарайман. Пур предприятисем те плана тултарса пымалла тăвайман, [illegible] нумай пулассĕ. Туса кăларакан продукци пахалăхне хак, уйрăмах районсенчи апат-çимĕç комбиначĕсенче кăларакан продукци пахалăхне татăклăн лайăхлатмалла.

Районсенчи апат-çимĕç комбиначĕсем чĕртаварсем базисем тума лайăх майсем пур пулин те, Апат-çимĕç Халăх Комиссариачĕ ку енĕпе çителĕксĕр ĕçлет. Комиссариатăн кунта кăтартса панă çитменлĕхсене шута илсе, вĕсене сывăх вăхăтрах пĕтермелле.

Производство программине тултарас тĕлĕшпе вырăнти топливо промышленность управленийĕн нумай вăрманпромхозĕсем начар мар ĕçлерĕç. 1943 çулхи плана, пĕтĕм управлени тăрăх илсен, 103 процент тултарнă. Торф хатĕрлемелли плана 140 процент пурнăçланă, куллен кирлĕ таварсем туса кăлармалли плана ирттерсе тултарнă.

Анчах та, вăрманпромхозсем производство программине ăнăçлăн тултарнă тата ытти чылай енĕпе лайăх ĕçленĕ пулин те, вĕсен финанс ĕçĕнче пысăк çитменлĕхсем пур. 1943 çулта производствăпа çыхăнман тăкаксем 265 пин тенкĕ пулнă. Вăл хисепрен 193 пин тенкине уйăрса панă вăрман участокĕсемпе усă курманшăн штраф тÿлесе пĕтернĕ. Сĕнтĕр вăрманпромхозĕ Атăл тăрăх 72 пин тенкĕ тăракан сулла юхтарса янă. Вăрманпромхозсем дебиторсен парăмĕсене пĕтерес тĕлĕшпе кирлĕ мерăсем йышăнман. Çаксене пула ĕнтĕ, вырăнти топливо промышленноçĕн управленийĕ хăйĕн бюджет умĕнчи обязательствисене пурнăçа кĕртме пур майсем те пулнă пулин те, 1943 çулта бюджета 116,6 пин тенкĕ парса çитереймен.

Чылай Халăх Комиссариачĕсемпе Управленисем иртнĕ çулта хăйсен предприятийĕсен ĕçне лайăхлатнипе пĕрлех, хăшпĕр хуçалăх организацийĕсем 1943 çулта начар тĕслĕхсемпе вĕçлерĕç. Çапла, сăмахран, Чăвашпромсоюз системине кĕрекен 45 артельтен 28 артель хăйсен 1943 çулхи производство заданийĕсене тултарайман. Артельсем туса кăларакан 24 тĕрлĕ тĕп продукцирен 13 продукци тăрăх плана тултарса çитереймен. Уйрăмах спичка, ĕнерчĕк-хăмăтсем, тÿмесем, тимĕр-тăмăр япалисем тăвас, известь кăларас тата атă-пушмаксем юсас тĕлĕшпе плана начар тултарнă.

Чăвашпромсоюз руководителĕсем плана тултарманнине чĕртаварсем пулманнипе ăнлантарма пăхаççĕ, анчах хăйсем уйăрса панă чĕртаварсемпе те туллин усă курайман. Тепĕр енчен илсен, тимĕр-тăмăр япалисем тума е тата тÿмесем, йăвăçран хăмăт кĕлещисем тума чĕртаварсене аякран кÿрсе килме кирлĕ мар. Тимĕр-тăмăр отхочĕсем, лаша чĕрнисем, çавăн пекех майракасем, рак хуранĕсем тата йывăç материалсем хамăр республикăра çителĕклĕ таранах пур.

Чăвашпромсоюз, 1943 çулта чылай япаласем туса кăларас тĕлĕшпе производство планне тултарман пирки, республика бюджетне 701 пин тенкĕ парса çитереймен.

Çакăнпа пĕрлех эпĕ Сессие Чăвашпромсоюз тăрăх 1944 çулхи бюджета укçа-тенкĕ хывмалли хисепе те чакарса кăтартса пани çинчен пĕлтерме кирлĕ тесе шутлатăп.

Чăвашпромсоюз руководителĕсем перекетлĕх режимĕ вăрçă вăхăтĕнче çирĕп закон пулса тăни çинчен манса кайнă. Чăвашпромсоюз артелĕсенче хуçасăрлăх [illegible]

[illegible]

сариачĕ ку енĕпе çителĕксĕр ĕçлет. Комиссариатăн кунта кăтартса панă çитменлĕхсене шута илсе, вĕсене сывăх вăхăтрах пĕтермелле.

менлĕхсем пур. Йĕпреçри лайăх механизациленĕ «Кооплеспром» артель питех те начар ĕçлет. Канашри Сталин ячĕпе тăракан, «Первое мая» артельсен предприятийĕсем, Сĕнтĕрвăрри районĕнчи катка-пичке тăвакан завод кирлĕ таран ĕçлеймеççĕ.

Древпромсоюз финанспа бюджет дисциплинине пăсать. Вăл 1944 çулхи январĕн 1-мĕшĕ тĕлне бюджета подоходнăй налог енĕпе кăна 1.105,1 пин тенкĕ парса çитереймен. Унсăр пуçне вăл бюджета суту-илÿ банкĕн расчечĕсем тăрăх 155,2 пин тенкĕ парса çитереймен. Çак укçа-тенкĕ артельсен склачĕсенче выртакан продукцире тата нормăран ытлашши чĕртаварсенче (1.841 пин тенкĕ) пулнă. Артельсен нормăран ытлашши чĕртаварсемшĕн тата хатĕр продукцишĕн банксенчен кивçен укçа илмелле пулнă, анчах вĕсем çавна туман.

Палăртас пулать, промысла кооперации системи банк кивçен паракан укçа-тенкĕпе питех те начар усă курать.

Древпромсоюз хăйĕн артелĕсем мелле ĕçлени çинчен пĕлмест. Вĕсен ĕçĕсене вĕренсе тĕпчемест. Çавăн пирки вара оборотри кĕрекен укçа-тенкĕ артельсенче нумай юлать.

Верховный Совет промкоопсен руководителĕсене, промкооперации уполномоченнăйĕсене асăннă çитменлĕхсене пĕтерсе, артельсенче çирĕп йĕркелĕх тума ыйтма тивĕçлĕ.

Бюджет Комиссийĕ чылай хуçалăх организацийĕсенче материалсен резервĕсем пысăк пулнине палăртрĕ. Çав пуян резервсене тата майсемпе туллин усă курас тесен, хуçасăрлăхпа кĕрешмелле, хуçалăх планне лайăхлатмалла, производство [illegible] пăхмалла, тăкаксем пуласси хирĕç кĕрешмелле, накопленисене ÿстерсе пымалла тата перекетлĕхĕн çирĕп режимне пăхăнса ĕçлемелле.

Чăваш АССР-ĕн бюджечĕн хисепне районсенчи бюджетсем кĕреççĕ. Районсен 1944 çулхи бюджечĕн хисепне 126.7[illegible] пин тенкĕ укçа тултарнă. Районсемпе хуласен бюджечĕн расходсем енĕпе тĕп задачи — вăл социаллă-культуралла мероприятисене ытларах укçа-тенкĕ парас тăрăшса пулать.

Районсемпе хула совечĕсен задачи вырăнти бюджетне тултарас [illegible] çăлкуçĕсене [illegible] вăйлатса пырасси çинче тăрать.

Райсовет исполкомĕсенчен нумайĕшĕсем бюджет енĕпе, çулталăк ыйтусенче шĕнче—ăна тума чухне тата унăн исполгĕсене пĕтĕçтерме чухне — çулталăк вĕçĕнче, кăна ĕçлеççĕ. [illegible] вара çитменлĕхсене пĕтерме [illegible] мест. [illegible] йонсен бюджечĕ тăрăх 1943 çулта 6.097,7 пин тенкĕ укçа-тенкĕ пухмалла тата социаллă-культуралла мероприятисене [illegible] палăртнă укçа 4.560,2 пин тенкĕ курнă.

Райсовет исполкомĕ финанспа бюджет енĕпе [illegible]

[illegible]

пана укçапа 105 процент усă курнă.

Хĕрлĕ Чутай районĕнче пачах та урăхла. Унта финанспа бюджет ĕçне питех те начар йĕркеленĕ. 1943 çулхи бюджетăн доход пайне 91 процент çеç тултарнă. Райсовет исполкомĕ вырăнти промышленность тата кооперации организацийĕсен ĕçне тĕрĕслесе тăман. Районри промышленность тăрăх 32.000 тенкĕ накоплени тумалла пулнă пулсан, 14.000 тенкĕ тăкак пулнă. Таварçаврăнăш планне 78,6 процент çеç тултарнă. Доходăн уйрăм пайĕсене (ялхуçалăх налогĕ, военнăй налог, колхозсенчен илекен подоходнăй налог, ялхуçалăх продукчĕсем хатĕрленинчен кĕрекен тата ытти доходсем тăрăх) укçа-тенкĕ чылай параймаи.

Райсовет исполкомĕ тата унăн председателĕ Полянин юлташ çак кирлĕ участокри ĕçе лайăхлатас тĕлĕшпе татăклă мерăсем йышăнман. Халăхран укçа-тенкĕ пухмалли тата государство дохочĕсен планне пĕтĕм 1943 çул тăршшĕпех тултараймаи. Çавна пула 1944 çулхи январĕн 1-мĕшĕ тĕлне налог енĕпе тÿлемелли парăмсем 1.137 пин тенке çити ÿснĕ. Районри бюджета укçа-тенкĕ сÿрĕккĕн пухăнпă пирки, Хĕрлĕ Чутай районне 182 пин тенкĕ дотаци панă.

Унта бюджетăн расход пайне те 90,1 процент çеç тултарнă. Районра ашшĕ-амăшĕсемсĕр тăрса юлнă ачасене усрама илес ĕç валли уйăрса панă укçа-тенкĕпе пачах та усă курман, районра ун пек ачасем пур. Пурăнмалли çуртйĕрпе коммуналлă хуçалăх валли тата район центрне лайăхлатма, шкулсемпе больницăсене юсама уйăрса панă укçа-тенкĕпе те усă курман.

Ялхуçалăх налогĕ хунă вăхăтра Хĕрлĕ Чутай районĕнче чылай йăнăшсем тунă. Унта пасароенчен тата çĕрпе усă курмасăр илекен доходсене пĕтĕмпех шута илмен, çар çыннисен çемьисене законпа пăхнă çăмăллăхсене паман.

Кун пек фактсем ытти районсенче те пулнă. Вывод хăй тĕллĕнех тухать: Чăваш республикинчи пур районсенче те финанспа бюджет ĕçне тĕпрен лайăхлатмалла.

Бюджет Комиссийĕ çапла шутлать: Халăх Комиссарĕсен Совечĕ республикăн 1944 çулта хамăр умра тăракан питех те пысăк задачисене палăртса тăракан бюджетне пурнăçа кĕртме тата ăна ирттерсе пурнăçа кĕртме кирлĕ мерăсене пĕтĕмĕшпех йышăнĕ. (Алă çупаççĕ).

Çуракине хатĕрленсе çитмелли фронтовой уйăхлăх

РЕСПУБЛИКĂРИ МТС-сем ТРАКТОРСЕНЕ ЮСАМАЛЛИ ПЛАНА 1944 ÇУЛХИ МАРТĂН 15-МĔШĔ ТĔЛНЕ МĔН ЧУХЛĔ ТУЛТАРНИНЕ КĂТАРТАКАН

СВОДКА

МТС-сем	Пурĕ юсанă (процентпа)	Март уйăхĕнчи плана тултарни (процентпа)
Вăрнар	100,0	40,0
Йĕпреç	100,0	—
Ишлей	100,0	—
Комсомольски	100,0	—
Красноармейски	100,0	—
Шупашкар	100,0	—
Шăхасан	100,0	—
Елчĕк	100,0	—
Элĕк	97,7	12,5
Куславкка	95,7	9,0
Сĕнтĕр	95,7	44,4
Чкаловски	92,9	9,0
Вăрмар	91,4	75,0
Сĕмĕрле	88,4	75,0
Çĕрпÿ	88,1	64,5
Сĕнтĕрвăрри	85,7	100,0
Етĕрне	82,0	50,0
Первомайски	80,0	—
Шăмăршă	79,4	14,2
Канаш	78,7	—
Хĕрлĕ Чутай	78,2	33,3
Куакшино	76,5	55,0
Тăвай	76,1	100,0
Улатăр	63,9	29,4
Пăрачкав	52,3	17,6
ЧАССР тăрăх пурĕ	86,2	28,0
Мартăн 10-мĕшĕ тĕлне пулнă	83,4	13,3

Награда çĕнĕ çитĕнÿсем тума хавхалантарать

ÇĔРПŸ. Республикăна Оборона Государственный Комитечĕн куçса çÿрекен Хĕрлĕ Ялавне тата иккĕмĕш премине районри ĕççыннисем хĕпĕртесе кĕтсе илчĕç. Çакă награда колхозниксемпе колхозницăсене, тракторист-трактористкăсене, районри мĕнпур ĕçхалăхне 1944 çулхи ялхуçалăх çулталăкĕн çĕнĕ çитĕнÿсем тăвас ĕçе хавхалантарать.

Республика Хĕрлĕ Ялав илнĕ ятпа районри чылай колхозсенче ĕç-хресченĕсен митингĕсем пулса иртрĕç. Митингсемпе пухусенче колхозниксем фронта, тăван çĕршыва пулăшас тĕлĕшпе обязательствăсем илеççĕ.

МТС-ра пулса иртнĕ митингра 76 çын пулчĕ.

— Пирĕн пулăшăва колхозсем кĕтеççĕ. Кăçал эпир тракторсене лайăххăн та тĕплĕнрех юсарăмăр, ĕç дисциплинине çирĕплетрĕмĕр. [illegible] бригадирĕ Степанов юлташ.

— Хаклă награда пире кашнине хамăран вырăнсенче татах та тимлĕрех ĕçлеме чĕнет. Çĕрпÿ МТС коллективĕ кăçал хăйĕн ĕçне тĕпренех çĕнетрĕ, тракторсене лайăх юсаса çитерет,—терĕ МТС директорĕ Арзамасцев юлташ. — Пирĕн коллектив кăçал уйхир ĕçĕнче çĕнĕ çитĕнÿсем тума тĕплĕн хатĕрленет. Эпир кăçал тракторсемпе тумалли ĕçсен çулталăкри планне ирттерсе тултарассишĕн, ăмăртура Красноармейски МТС-ран мала тухассишĕн вăрçă вăхăчĕ ыйтнă пек, пĕтĕм вăйпа кĕрешĕпĕр.

Нĕрĕш ялсоветĕнчи «Красный Октябрь» колхоз членĕ Васильева юлташ митингра çапла каларĕ:

— 1943 çулта эпир тырпула уйхиртен аван пуçтарса кĕртрĕмĕр, тухăçлă тырпул туса илсе, фронта чылай пысăк пулăшу пама пултартăмăр. Кăçал та фронт умĕнче парăмра пулмастпăр. Эпир гектартан сĕр пăт тырă туса илĕпĕр.

Б. АВКСЕНТЬЕВ,
ВКП(б) райкомĕн секретарĕ.

Ялхуçалăх машинисем валли запаслă пайсем тумалли задание пурнăçланă

Орденлă Чăваш республики 1943 çулта вăйлă тырпул туса илнĕшĕн Оборонăн Государственный Комитечĕн куçса çÿрекен Хĕрлĕ Ялавне тата иккĕмĕш премине илме тивĕçлĕ пулчĕ.

Çак пысăк награда çине предприятисенче ĕçлекен рабочисем те ĕç тухăçлăхне ытларах ÿстернипе ответлеççĕ.

Челноков юлташ главнăй инженер пулса ĕçлекен завод коллективĕ Сталин ячĕпе тăракан артиллери завочĕн коллективĕ чĕнсе каланине сÿтсе-явнă хыççăн ялхуçалăх машинисен запаслă пайĕсене тума илнĕ обязательствăна мартăн 15-мĕшĕ тĕлне чыслăн пурнăçларĕ.

Халĕ завод коллективĕ уборка вăхăтĕнче кирлĕ ялхуçалăх машинисен запаслă пайĕсене тума тытăннă. Гольдман юлташ начальник пулса ĕçлекен цех ку енĕпе пĕтĕм задание срокчен 15 кун малтан пурнăçларĕ.

— Оборонăн Государственный Комитечĕн куçса çÿрекен Хĕрлĕ Ялавĕ колхозсене çеç мар, предприятисенчи рабочисене те тата тухăçлăхрах ĕçлеме хушать, — тесĕ кунти рабочисем.

Совет Союзĕн Геройĕ И. К. Поляков юлташ тăван ялĕнче

Мартăн 16-мĕшĕнче Совет Союзĕн Геройĕ И. К. Поляков юлташ Çĕмĕрле районĕнчи Кĕçĕн Кăмаша ялне килчĕ. Колхозниксемпе колхозницăсем тата ялти «Обод» промысла артелĕнче ĕçлекенсем тăван çĕршывăн паттăр ывăлне ăшшăн кĕтсе илчĕç.

Совет Союзĕн Геройĕ тăван яла таврăннă ятпа, вăл вĕреннĕ шкулта ĕççыннисен пухăвĕ пулса иртрĕ. Пухăва кÿршĕри ялсенчен те хăнасем нумай пынă. Кĕçĕн Кăмаша ялсовет исполкомĕн председателĕн заместителĕ Самарин юлташ пухăва уçнă чухне героя колхозсен тата предприятисен ĕçĕсемпе паллаштарчĕ, малта пыракан çынсем çинчен каласа пачĕ.

Кăмаша ялсоветĕнчи ĕççыннисем пирĕн чаплă земляка Отечественнăй вăрçă фрончĕсенче паттăр çапăçнăшăн, ăна Совет Союз Геройĕн ятне панăшăн тата пирĕн землякĕсене 18 çынна правительство орденсемпе медальсем парса наградăланăшăн савăнаççĕ,—тесе пĕлтерчĕ Самарин юлташ хăйĕн сăмахне.

Ун хыççăн Совет Союзĕн Геройĕ Поляков юлташ сăмах тухса каларĕ. Вăл мухтавлă Хĕрлĕ Çар нимĕç захватчикĕсене мĕнле аркатса пыни çинчен тата нимĕç вăрăхурахĕсен ирсĕр ĕçĕсем çинчен тĕплĕн каласа пачĕ.

— Совет халăхĕ пирĕн алла хăватлă хĕçпăшал пачĕ,—тет вăл. — Эпир, Хĕрлĕ Çар воинĕсем, совет халăхĕ панă хĕçпăшалпа нимĕç захватчикĕсене Хĕвеланăçнелле хăвалатпăр. Çĕнтерÿ сывăх ĕнтĕ. Аслă Сталин ертсе пынипе эпир нимĕç захватчикĕсене тĕпĕ-йĕрĕпех аркатса тăкăпăр.

Юлашкинчен Поляков юлташ колхозниксемпе колхозницăсене çуракине вăрçă вăхăтне тивĕçлĕ пек туса ирттерессишĕн, гектартан 100 пăт тырă туса илессишĕн вăйхăвата шеллемесĕр кĕрешме чĕнчĕ.

Кун хыççăн героя саламласа «1-ое мая» колхоз председателĕ орденоносец Толстов тата «Обод» артель председателĕ Элюков юлташсем тухса каларĕç. Вĕсем хăйсен сăмахĕнче Поляков юлташа — колхозниксемпе колхозницăсем малашне те хастарлăн ĕçлесе пырĕç, тесе шантарчĕç.

Пуху хыççăн хăналану пулчĕ.

А. АНТОНОВ.

Ют çĕршывсенче

„Советсен калама çук пысăк шăпăрĕ нимĕçсене Украинăран шăлса кăларать"

АМЕРИКА ХАÇАЧĔСЕМ ХĔРЛĔ ÇАРĂН ВĂРÇĂ ĔÇĔСЕМ ÇИНЧЕН

НЬЮ-ЙОРК, мартăн 18-мĕшĕ. (ТАСС). Америка хаçачĕсем Хĕрлĕ Çар Украинăра наступлени туса пыни çинчен нумай статьясем çыраççĕ. Çав статьясенче вĕсем совет çарĕсен чаплă çĕнтерĕвĕсене ырласа саламлаççĕ.

«Нью-Йорк таймс» хаçат çапла çырать: вырăс çарĕсем нимĕçсен Украинăри тĕп çыхăнăвĕсене татрĕç, халĕ вĕсем хальхи меллĕ лару-тăрупа туллин усă кураççĕ. Совет çарĕсен стратегийĕ, чăтăмлăхĕ тата организацийĕ пире савăнтараççĕ. Нимĕçсем каялла чакни чылай участоксенче пĕр йĕркесĕр каялла тарни пулса тăчĕ. Советсен калама çук пысăк шăпăрĕ нимĕçсене Украина çĕрĕ çинчен шăлса кăларать. Хĕрлĕ Çар шыв-шур вăхăтне пăхмасăр хăвăрт наступлени туса пынине хаçат уйрăмах хытă палăртать. Геббельс нумаях пулмасть союзниксен çарĕсем пырса кĕрессинчен хăраса калани çинчен хаçат çапла çырать: «Тăшман çавăн пек хăранине союзниксен Германи çарне пĕтерсе тăкмаллах пыра-пыра çапнипе вырăнлă туса хумалла».

«Вашингтон пост» хаçат шухăшĕпе, «нимĕçсем Украинăра тытăнса тăма хăтланни путланса ларчĕ, çапла хăтланни вĕсене çынсемпе техника тĕлĕшĕнчен питĕ хакла ларчĕ». Ассошиэйтед пресс агентствин сотрудникĕ Симпсон çапла çырать: «Çапăçăва хутшăннă çарсен хисепĕ енчен тата çапăçу анлăшĕ енчен пăхсан, Кăнтăр Украинăшăн пыракан çапăçу пек çапăçу историре урăх пулман. Çав çапăçу вырăссем çĕнтернипе вĕçленчĕ».

МЕКСИКА ХАÇАЧĔСЕМ ХĔРЛĔ ÇАРĂН НАСТУПЛЕНИЙĔ ÇИНЧЕН

МЕКСИКО, мартăн 18-мĕшĕ. (ТАСС). Хĕрлĕ Çар çĕнтерÿллĕн малалла тапăнса пыни çинчен калакан хыпарсене Мексикăра тухакан пур хаçатсем те çаплах пĕрремĕш страницăсенче пысăк саспаллисемпе пичетлеççĕ. «Ла Пренса» хаçат совет çарĕсен наступленине çисĕмле наступлени тесе ят парать.

«Эль Тиемпо» хаçат совет çарĕсен наступленийĕ çинчен çырнă пысăк статьяра çапла калать: Хĕрлĕ Çарăн стратегийĕ вăл Маршал Сталин тунă çĕнĕ пысăк çарăн стратегийĕ пулса тăрать, тет.

Румынире „Отечественнăй фронт" тунă

СТАМБУЛ, мартăн 17-мĕшĕ. (ТАСС). Кунта Румынире тунă «Отечественнăй фронтăн» ĕçĕсем çинчен хыпарсем илнĕ. Çав хыпарсем тăрăх, Совет Союзĕпе тата унăн союзникĕсемпе мир тума тăрăшакан «Отечественнăй фронт» майлă тăракан çынсен хисепĕ ÿснĕ çемĕн ÿссе пырать. «Отечественнăй фронт» руководителĕсем хăйсен ячĕсене пĕлтермеççĕ-ха.

«Отечественнăй фронт» программинче 7 пункт: 1) «Германи вăрçинчен» халех тухмалла, демократиллĕ çĕршывсемпе пĕрлешмелле; 2) нимĕçсене Румынирен хăваласа кăлармалла; 3) Антонеску правительствине сирпĕтсе антармалла; 4) чăннипех наци правительстви пулса тăракан правительство тумалла; 5) çĕнĕрен демократиллĕ правăсемпе ирĕклĕхсем туса хумалла; 6) мĕнпур патриотсене тĕрмесенчен кăлармалла; 7) вăрçăшăн айăплисене наказани памалла. Программа çак сăмахсемпе вĕçленет: «Гитлерла тиранийе пĕтерсе лартар! Ирĕклĕ те никама пăхăнман Румыни сывă пултăр!»

«Отечественнăй фронт» «Ирĕклĕ Румыни» ятлă хаçат кăларса тăрать. Çав хаçатра вăл Румынире Гитлера хирĕç пыракан мĕнпур вăйсене, вĕсем политика тĕлĕшĕпе мĕнле шухăшланине пăхмасăр, пĕрлештерме чĕнет.

Союзниксен авиацийĕн ĕçĕсем

ЛОНДОН, мартăн 18-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентстви пĕлтернĕ тăрăх, Америка бомбардировщикĕсен пысăк соединенийĕсем истребительсем хÿтĕлесе пынипе мартăн 17-мĕшĕнче Кăнтăр Германири промышленность объекчĕсене тапăннă. Американецсен 22 бомбардировщикĕ тата 13 истребителĕ хăйсен базисене таврăнман.

ВЕНĂНА ТАПĂННИ

ЛОНДОН, мартăн 17-мĕшĕ. (ТАСС). Союзниксен Италири çарĕсен главнăй штабĕ çапла пĕлтерет: паян кăнтăрла американецсен «Вĕçекен крепость» йышши бомбардировщикĕсем Венăна тапăннă.

СОЮЗНИКСЕН АВИАЦИЙĔ ВЕНĂПА СОФИЯНА ТАПĂННИ ÇИНЧЕН ТĔПЛĔНРЕХ ПĔЛТЕРНИ

ЛОНДОН, мартăн 19-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентстви пĕлтернĕ тăрăх, союзниксен бомбăсем пăрахакан йывăр авиацийĕн пысăк вăйĕсем мартăн 17-мĕшĕнче Венăна тапăнни ку хулана çак вăрçă вăхăтĕнче кăнтăрла пĕрремĕш хут тапăнни пулать. Хулана тапăннă чухне сывлăшра нимĕçсен пĕр истребительне те тĕл пулман.

СТАМБУЛ, мартăн 19-мĕшĕ. (ТАСС). Кунта çитнĕ хыпарсем тăрăх, мартăн 16-мĕшĕ ыран тенĕ чух çĕрле союзниксен авиацийĕ Софияна тапăннă чухне бомбăсем çар министерстви çуртне тÿрех пырса тивни паллă пулнă. Ку çуртра болгарсен тата нимĕçсен командованийĕ вырнаçнă. Бомбăсем çавăн пекех ют çĕршыв ĕçĕсен министерствин çуртĕ çине, çар казармисем çине тата ытти çуртсем çине те ÿкнĕ. Хулара электричество, шыв çук, трамвай çулĕсем ишĕлнĕ.

Хулара урамсенчи ишĕлчĕке тасатма çар чаçĕсемсĕр пуçне хулари мирлĕ халăха мобилизациленĕ.

Италири вăрçă ĕçĕсем

ЛОНДОН, мартăн 18-мĕшĕ. (ТАСС). Союзниксен Италири çарĕсен главнăй штабĕ çапла пĕлтерет: Кассино районĕнче питĕ хытă çапăçаççĕ. Американецсен 5-мĕш армийĕн пехотипе танкĕсем, артиллерипе авиаци пулăшса пынипе, тăшман Кассино хулин кăнтăр-хĕвеланăç пайĕнче тата хуларан хĕвеланăçнерехри çÿллĕ вырăнсем çинче хирĕç тăнине çĕнтерсе пыраççĕ. Акăлчансен 8-мĕш армийĕн фронтĕнче тата Анцио патĕнчи плацдарм районĕнче (Римран кăнтăртарахра) патрульсем вăйлă кĕрешнĕ.

ЛОНДОН, мартăн 19-мĕшĕ. (ТАСС). Официально пĕлтернĕ тăрăх, союзниксен çарĕсем Кассино хули районĕнче çаплах малалла куçса пыраççĕ. Хула, хăйĕн хĕвеланăç енчи пайĕсĕр пуçне, пĕтĕмĕшпех союзниксен аллинче тăрать.

Мартăн 19-мĕшĕ ыран тенĕ чух çĕрле союзниксен авиацийĕ Пловдиври чугун çул узелне (Болгари) тапăннă.

Иртнĕ талăкра сывлăшри çапăçусенче тăшманăн 56 самолетне персе ÿкернĕ. Çавăн пекех тата тăшманăн çĕр çинче тăнă самолечĕсене нумай пĕтерсе тăкнă.

КĔСКЕН

● Вăрçă пуçланнăранпа 1944 çулччен Англире 83 пин танкпа бронемашина тата [illegible], 90 пин самолет ытла, 26 миллиметртан пысăкрах калибрлă 115 пин тупă ытла, 5 миллион та 250 пин пулеметпа винтовка тата автоматсем туса кăларнă. Англин суднăсем тăвакан промышленноçĕ нимĕçсем путарнă суднăсен вырăнне çĕнĕ суднăсем туса хунă, çапла вара 1943 çул пĕтнĕ тĕле Англи флочĕн нумай йышши карапĕсен хисепĕ вăрçă пуçланнă чухнехинчен ытларах пулса тăнă.

Ответлă редакторăн заместителĕ **А. А. ЭСХЕЛЬ.**

РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5, Дом печати, ТЕЛЕФОНСЕМ: редакторăн — 0— 67, секретарьпе заместителĕн — 4— 26, парти пурнăç пайĕн — 3—99, промышленноçпа ялхуçалăх пайĕсен 5—31, издательство конторин —0—23.

НТ 00586 Типографи №1, Управления полиграфпромышленности при СНК ЧАССР. Заказ №2 ф. б. 59×12 п. л. Тираж 14.400 экз